7) тăван чĕлхен эстетика функцине ăнланса илни, илемлĕ литература тексчĕсене тишкернĕ май пуплев единицин илемлĕхне курма пĕлни.

**Вĕренекенĕн пултармалла:**

**8 класс пĕтернĕ çĕре**

- предметра усă куракан чĕлхе единицисене пĕр-пĕринчен уйăрма, вĕсене ăнланма, унсăр пуçне хăйсен ĕçĕсене хак пама, çырнине тĕрĕслеме тата тĕрĕс информаци пама;
-сăмах майлашăвĕпе предложени хушшинчи уйрăмлăхсене ăнлантарма;
- анлă сăмах майлашăвĕсене ансăррисенчен уйăрма;
- пуплеври сăмах çыхăнăвĕн мелĕсене палăртма;
- предложенири шухăш тĕшшине тупма;
-предложенири сăмахсене предложенин содержанине кура йĕркелеме;
-ыйтăва сăпайлăрах тума;
- предложенин темипе ремине тупма;
- предложение членсем тăрăх тишкерме;
- хутсăр тата хутлă предложенире чарăну паллисене тĕрĕс лартма, вĕсене ăнлантарма;
- тӳрĕ пуплеве тӳрĕ марринчен уйăрма.

**«Чăваш чĕлхи» предметăн содержанийĕ:**

**8 класс**

«Тăван чĕлхе – асаттесен пехилĕ» кӳртĕм урок.

Предложенин тĕп тата кĕçĕн членĕсем. Предложени членĕсем. Подлежащи. Сказуемăй. Подлежащипе сказуемăй çыхăнăвĕ. Подлежащипе сказуемăй хушшине тире лартасси. Предложенин кĕçĕн членĕсем. Определени. Дополнени. Обстоятельство. Предложенисене членсем тăрăх тишкересси.

Тĕп членсăр предложенисем. Тĕп членсăр предложенисен тĕсĕсем.

Кăткăсланнă хутсăр предложенисем.

Пĕр йышши членлă предложенисем. Пĕр йышши членлă предложенисем. Союзсемпе çыхăнакан пĕр йышши членсем. Пĕр йышши членсем çумĕнчи пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем.

Чĕнӳ.

Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем. Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисене чарăну паллисемпе уйрăмлатасси.

Диалог тата монолог.

Тулли мар предложенисем.

Уйрăмлатакан сăмахсем.Уйрăмлатни тенине епле ăнланмалла? Уйрăмлату правилисем.

Урăх çын сăмахĕсене пĕлтермелли мелсем. Урăх çын сăмахĕсене пĕлтермелли тĕп мелсем.Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем. Диалог. Цитата тата эпиграф.Пайăр мар тӳрĕ пуплев.

Хутлă предложени. Хутлă предложенин паллисем. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем. Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси.

Чĕлхе тата пуплев. Чĕлхепе пуплев хушшинчи тачăçыхăну. Пуплев тата хутшăну. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ.

Текст. Чĕлхен функцирен килекен тĕсĕсем. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ. Ĕçлĕ стиль.

Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси.

8 класра вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси.

**Чăваш чĕлхи урокĕсен тематика планĕ – 8 класс (68 сехет)**

| Уроксен йěрки | Урок теми | Сехетсен шучě |
|---|---|---|
| 1 | Тăван чěлхе — асаттесен пехилě. | 1 |
| | **7-мěш класра вěреннине аса илни (3 сехет)** | |
| 2 | 7-мěш класра вěреннине аса илесси. Глаголăн сăпатсăр формисем. | 1 |
| 3 | 7-мěш класра вěреннине аса илесси. Пулăшу пěлтерěшлě пуплев пайěсем. | 1 |
| 4 | Тěрěслев диктанчě. | 1 |
| | **Предложенин тěп тата кěçěн членěсем (11 сехет)** | |
| 5 | Предложени членěсем. Подлежащи. | 1 |
| 6 | Сказуемăй. | 1 |
| 7 | Подлежащипе сказуемăй çыхăнăвě. | 1 |
| 8 | Подлежащипе сказуемăй хушшине тире лартасси. | 1 |
| 9 | Предложенин кěçěн членěсем. Определени. | 1 |
| 10 | Изложени. | 1 |
| 11 | Дополнени. | 1 |
| 12 | Обстоятельство. | 1 |
| 13 | Обстоятельство. | 1 |
| 14 | Предложенисене членсем тăрăх тишкересси. | 1 |
| 15 | Тěрěслев диктанчě. | 1 |
| | **Тěп членсăр предложенисем (3 сехет)** | |
| 16 | Тěп членсăр предложенисен тěсěсем. | 1 |
| 17 | Тěп членсăр предложенисен тěсěсем. | 1 |
| 18 | Тěп членсăр предложенисен тěсěсем"темăна пěтěмлетни. | 1 |
| | **Кăткăсланнă хутсăр предложенисем (13 сехет)** | |
| 19 | Пěр йышши членсем. | 1 |
| 20 | Союзсемпе çыхăнакан пěр йышши членсем. | 1 |
| 21 | Пěр йышши ченсем çуменчи пěтěмлетӳ сăмахěсем. | 1 |
| 22 | Чěнӳ. | 1 |
| 23 | ÇПАу. Изложени. | 1 |
| 24 | Изложени. | 1 |
| 25 | Кӳртěм сăмахсемпе предложенисем. | 1 |
| 26 | Кӳртěм сăмахсемпе предложенисене чарăну паллисемпе уйăрасси. | 1 |
| 27 | Кӳртěм сăмахсемпе предложенисене чарăну паллисемпе уйăрасси. | 1 |
| 28 | Сочинени. | 1 |
| 29 | Тулли мар предложенисем. | 1 |
| 30 | Тулли мар предложенисем. | 1 |
| 31 | Тěрěслев диктанчě. | 1 |
| | **Уйрăмлатнă сăмахсем (5 сехет)** | |
| 32 | Уйрăмлатни тенине мěнле ăнланмалла. | 1 |
| 33 | Уйрăмлату правилисем. | 1 |
| 34 | Уйрăмлату правилисем. | 1 |
| 35 | Хутсăр предложенисене тишкересси. | 1 |
| 36 | «Хутсăр предложени» темăна вěреннине аса илсе çирěплетесси. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| **Урӑх ҫын сӑмахӗсене пӗлтермелли мелсем (9 сехет)** | | |
| 37 | Урӑх ҫын сӑмахӗсене пӗлтермелли тӗп мелсем. | 1 |
| 38 | Тӳрӗ пуплевлӗ предложенисем. | 1 |
| 39 | Тӳрӗ пуплевлӗ предложенисем. | 1 |
| 40 | Диалог. | 1 |
| 41 | Цитата тата эпиграф. | 1 |
| 42 | Сочинени. | 1 |
| 43 | Пайӑр мар тӳрӗ пуплев. | 1 |
| 44 | Изложени. | 1 |
| 45 | Изложени. | |
| **Хутлӑ предложени (7 сехет)** | | |
| 46 | Хутлӑ предложенин паллисем. | 1 |
| 47 | Хутлӑ предложенин паллисем. | 1 |
| 48 | Ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложенисем. | 1 |
| 49 | Ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложенисенче чарӑну палли лартасси. | 1 |
| 50 | Ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложенисенче чарӑну палли лартасси. | |
| 51 | Ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложенисене тишкересси. | 1 |
| 52 | Тӗрӗслев ӗҫӗ. | 1 |
| **Чӗлхе тата пуплев (4 сехет)** | | |
| 53 | Чӗлхепе пуплев хушшинчи тачӑ ҫыхӑну. | 1 |
| 54 | Пуплев тата хутшӑну. | 1 |
| 55 | Пуплев ӗҫӗ- хӗлӗ. | 1 |
| 56 | Сочинени. | 1 |
| **Текст (5 сехет)** | | |
| 57 | Чӗлхен функцирен килекен тӗсӗсем. | 1 |
| 58 | Чӗлхен функцирен килекен тӗсӗсем. | 1 |
| 59 | Ӗҫлӗ стиль. | 1 |
| 60 | Ӗҫлӗ стиль. | 1 |
| 61 | Изложени. | 1 |
| **8-мӗш класра вӗреннине аса илсе пӗтӗмлетесси (7 сехет)** | | |
| 62 | 8- мӗш класра вӗреннине аса илсе пӗтӗмлетни. | 1 |
| 63 | 8- мӗш класра вӗреннине аса илсе пӗтӗмлетни. | 1 |
| 64 | 8- мӗш класра вӗреннине аса илсе пӗтӗмлетни. | 1 |
| 65 | 8- мӗш класра вӗреннине аса илсе пӗтӗмлетни. | 1 |
| 66 | Тӗрӗслев диктанчӗ. | 1 |
| 67 | Вӗренӳ ҫулӗнче тӗл пулнӑ йывӑрлӑхсем. | 1 |
| 68 | Пӗтӗмлетӳ урокӗ. | 1 |

**Ăнлантарни (9 класс)**

Ĕç программине çак документсене тĕпе хурса тунă:

- **стандарт:** Государственный образовательный стандартосновного общегообразования (приказ Министерства образования и науки Российской Федерации от 17.12.2010 г. № 1897);
- **программа**: Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9-мĕш класĕсем валли/ И.А.Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М.Виноградов. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013.
- **программа**: Основная образовательная программа основного общего образования МБОУ «Персирланская ООШ»;
- **положения** о рабочих программахМБОУ «Персирланская ООШ»;

Кашни çын хăйĕн тăван чĕлхине вĕренмелле, унпа яланхи пуплевре тата çырура тĕрĕс усă курма пĕлмелле. Ку ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме ĕç программи пулăшать. 9- мĕш класра синтаксис материалĕсем тĕп вырăнта тăраççĕ.Синтаксисăн паллăрах уйрăмлăхсем пур: предложени моделĕсем виçеллĕ пулни. Сăмах йĕркин хăйне евĕрлĕхĕ. Шухăш тĕшшине палăртмалли мелсем. Предложенин интонацийĕ тикĕсрех пулни. Çуклă предложенисем, вĕсен уйрăмлăхĕсем. Чĕлхе перекечĕ. Чăваш чĕлхи пулăвĕ. Паллăрах тĕпчевçĕсем ( Н.И.Ашмарин, Ф.Т.Тимофеев, Т.М.Матвеев, В.Г. Егоров, М.Р.Федотов, И.А. Андреев, Л.П. Сергееев т.ыт. те) , вĕсен ĕçĕсем.

Вĕрентекенĕн çакна асра тытмалла: чĕлхепе хутшăнура (калаçура е çырура) кирлĕ пек усă курма вĕрентеймесен унăн тытăмĕ çинчен калаçнин усси çукпа пĕрех. Чĕлхе тытăмне пĕлнине пуплевре палăртмалла. Ачан калаçăвĕпе çырăвĕ çулсеренех пуянланса, якалса, тасалса пыни кăна унăн чĕлхе пĕлĕвĕ тарăнланса пынине кăтартать.

Чăваш чĕлхи предмечĕ умне çакăн пек ĕçсем тухса тăраççĕ :

**Вĕрентӳ тĕллевĕсем:**

- вĕренекенсен калаçăвĕпе çырăвне аталантарасси тата тĕрĕс те илемлĕ вулама хăнăхтарасси;
- вĕренекенсен калаçăвне тĕрĕс йĕркелесси;
- вĕренекенсен логикăллă шухăшлавне аталантарасси;
- орфографипе пунктуаци хăнăхăвĕсене çирĕплетесси;
- уроксенче ачасен çыхăнуллă калаçăвне аталантарасси.

**Вĕрентӳ предмечĕн задачисем:**

- тăван чĕлхене юратма, чĕлхе урокĕсенче илнĕ пĕлӳпе ӳлĕмрен пурнăçра, ĕçре усă курма хăнăхтарасси;
- ачасене сăмахсемпе вырăнлă та тирпейлĕ усă курма вĕрентесси тата вĕсен лексикине пуянлатасси;
- вĕренекенсене фонетика, лексика, грамматика никĕсĕсемпе тата чĕлхе наукин тĕп ыйтăвĕсемпе, чĕлхен общество пурнăçĕнчи вырăнĕпе паллаштарасси;
- грамматикăн кашни темине вĕрентнĕ чух ачасене литература чĕлхин çирĕпленнĕ нормисемпе паллаштарасси, пуплеве çав нормăсене пăхăнса йĕркелеме вĕрентесси.

**Вĕрентӳ предмечĕн вырăнĕ:**

Пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулти 9 класс ачисем тĕрлĕ шайри пĕлӳллĕ.Чăваш чĕлхи сехет шучĕ базислă плана пăхăнса тăрать. Пурĕ 51 сехет. 1-мĕш, 2-мĕш чĕрĕкре -2 сехет; 3-мĕш, 4-мĕш чĕрĕкре -1 сехет.

**Вĕренӳ пособийĕ:**

Чăваш чĕлхи: 9 класс валли. Ю.М. Виноградов, А.С. Егорова, Л.Г. Петрова. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2020.

**Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем**

**Харкамлăх (личностные) результачĕсем:**

1) тăван чĕлхе чăваш халăхĕн наци пурлăхĕ пулнине, Чăваш Республикинче вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи пулнине ăнланни; тăван чĕлхепе ўлĕмрен кулленхи пурнăçра, суйласа илнĕ профессире усă курма пултарни;

2) чăваш чĕлхин илемлĕхне хаклама пултарни, тăван чĕлхене хисеплени, унпа мăнаçланни; чăваш пуплевĕн нормисене наци культурин пуянлăхĕ шайне лартса сыхласси кашни чăвашшăн пысăк тивĕç тесе йышăнни; пуплеве куллен-кун аталантарма тăрăшни;

3) шухăшпа туйăма палăртма усă куракан сăмахсем, грамматика хатĕрĕсем пуплевре йышлă пулни; ача хăй пуплевне (калаçнине те, çырнине те) сăнаса тивĕçлĕ хак пама пултарни.

**Пур предмета та вĕренме кирлĕ (метапредметные) результатсем:**

1) пуплевĕн мĕн пур тĕсĕпе усă курни:

- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернĕ информацие тĕрĕс ăнланни;
- вулавăн тĕрлĕ мелĕпе усă курни;
- тĕрлĕ çĕртен (хаçат-журналтан, Интернетран, радиопа телевиденирен т.ыт.те) килекен материалпа паллашса информаци пухма пултарни;
- ку е вăл темăпа çыхăннă материала вуласа е илтсе тупма, ăна пухса, тишкерсе, кирлине суйласа илме пултарни; пухнă информацие сыхлама, улăштарма тата кирлĕ çĕрте усă курма пултарни (информаци çăл куçĕ хаçат-журнал, тĕрлĕрен техника хатĕрĕ пулма пултарать);
- пĕччен е ушкăнпа тумалли вĕренӳ ĕçĕн тĕллевне, йĕркине ăнланса илни, ĕç результатне каласа е çырса хаклама пултарни;
- шухăша сăмах вĕççĕн е çырса ирĕклĕ те тĕрĕс уçса пама пултарни;
- тантăшсем умĕнче пĕчĕк е пысăкрах доклад тума хăнăху пурри;

2) вĕренӳре илнĕ тĕрлĕ пĕлӳпе, нумай-нумай хăнăхупа яланхи пурнăçра усă курни; тăван чĕлхене вĕренсе пухнă пĕлӳпе тата хăнăхупа ытти предмета (тăван мар чĕлхесене, литературăна т.ыт.те) вĕренме усă курни;

3) калаçнă май, пĕр-пĕр ĕç тунă чух е мĕнле те пулин тавлашуллă ыйтăва сӳтсе явнă чух çынсемпе тĕрлĕ çыхăнăва кĕме хăнăху пурри; пĕр-пĕр йĕркепе иртекен хутшăнура е яланхи калаçура наци культуринче çирĕпленнĕ пуплев нормисене пăхăнни.

**Предмета вĕреннин (предметные) результачĕсем:**

1)чăваш чĕлхи чăваш халăх чĕлхи, хамăр республикăра патшалăх чĕлхи (вырăс чĕлхипе пĕрле) пулнине ăнланни; тăван чĕлхепе культура хушшинче тачă çыхăну пуррине пĕлни; чăваш чĕлхи уйрăм çынпа общество пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине ăша хывни;

2) тăван чĕлхене пĕлни чăваш культуришĕн, халăх пуласлăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, çавăнпа чĕлхене вĕренме тивĕç пуррине ăнланни;

3) пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма пултарни;

4) чăваш чĕлхине тĕпчекен ăслăлăхăн никĕсне ăша хывни; чĕлхен шайĕсемпе единицисем хушшинчи çыхăнусене ăнланни;

5) чĕлхе ăслăлăхĕн тĕп ăнлавĕсене алла илни: чĕлхе вĕрентĕвĕ тата унăн тĕп пайĕсем; чĕлхе тата пуплев, пуплевпе усă курса хутшăнни, калаçу тата çыру; монолог тата диалог; пуплев ситуацийĕ; пуплевĕн функципе шухăшран килекен тĕсĕсем (калав, сăнлав, ăслав); текст, чĕлхе единицисем, вĕсен паллисем тата пуплевре усă курнă чухнехи уйрăмлăхсем;

6) сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме пĕлни, сăмах майлашăвĕпе предложение синтаксис енчен тишкерни; текста ун содержанийĕ, тĕп паллисемпе тытăмĕ енчен, пуплевĕн функцире палăракан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илсе тишкерни;

7) тăван чĕлхен эстетика функцине ăнланса илни, илемлĕ литература тексчĕсене тишкернĕ май пуплев единицин илемлĕхне курма пĕлни.

**Вĕренекенĕн пултармалла:**

**9 класс пĕтернĕ çĕре**

- сăмахсене лексика тата морфологи тишкĕрĕвĕ тума, сăмах тытăмне пĕлме, хутсăр тата хутлă предложенисене тишкерме;

- сасăпа сас палли хушшинчи уйрăмлăха ăнлантарма;
- уçă сасăсемпе хупă сасăсен ушкăнĕсем çинчен каласа пама;
- хупă сасăсен янăравлăхĕпе çемçелĕхне ăнлантарма;
- пуплев пайĕсемпе вĕсен формисене пĕр-пĕринчен уйăрма;
- пуплев пайĕсемпе вĕсен формисене пĕр-пĕринчен уйăрма;
- ăмах пулăвĕпе сăмах улшăнăвне пĕр-пĕринчен уйăрма;
- чĕлхепе пуплев мĕн иккенне, чĕлхе пуплевре кăна палăрнине, пуплевре кăна аталанма пултарнине ăнлантарма;
- калаçура та, çырура та сăмах йĕркине кирлĕ пек тытса пыма;
- тĕрлĕ темăпа хайлав çырма;
- пĕр-пĕр темăпа кĕске доклад тума, тухса калаçма;
- çĕлĕ çыру е хăш-пĕр ĕç хучĕсем çырма.

**«Чăваш чĕлхи» предметăн содержанийĕ:**

**9 класс**

<u>«Чăваша чăваш чĕлхи кирлĕ» кӳртĕм урок.</u>

<u>8 класра вĕреннине аса илесси.</u>

<u>Сыпăнуллă хутлă предложенисем.</u> Сыпăнуллă хутлă предложенисем. Сыпăнуллă хутлă предложенисен тĕсĕсем. Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем. Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси. Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем. Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси. Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем. Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси. Сыпăнуллă хутлă предложенисене тишкересси.

<u>Пăхăнуллă хутлă предложенисем.</u> Пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсем. Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсем. Пĕхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ. Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси. Пăхăнуллă хутлă предложени ушкăнĕсем. Пăхăнуллă хутлă предложенисене тишкермелли йĕрке. Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем. Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем. Хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем. Пайĕсене аффикссемпе çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем. Пайĕсене -и аффикспа çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем. Пайĕсене падеж аффиксĕсемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем. Пайĕсене падеж системине кĕмен аффикссемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем. Пайĕсене глаголăн деепричасти аффиксĕсемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем. Пайĕсене причасти аффиксĕсемпе çыхăнтаркан пăхăнуллă хутлă предложенисем. Пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем.

<u>Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем.</u> Хутлă предложенисем кăткăсланни. Кăткăс тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем. Кăткăс тытăмлă сыпăнуллă хутлă предложенисем. Кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложенисем.

<u>Текст</u>. Чĕлхе, пуплев тата çыру. Чăваш çырăвĕн аталанăвĕпе паянхи сăн-сăпачĕ. Публицистика стилĕ. Публицистика жанрĕсем.

<u>Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси.</u>

<u>9 класра вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси.</u>

**Чăваш чĕлхи урокĕсен тематика планĕ – 9 класс (51 сехет)**

| Уроксен йĕрки | Урок теми | Сехетсен шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Чăваша чăваш чĕлхи кирлĕ. | 1 |
| | **8-мĕш класра вĕреннине аса илесси (3 сехет)** | |

| | | |
|---|---|---|
| 2 | 8-мĕш класра вĕреннине аса илесси. Предложенин тĕп тата кĕҫĕн членĕсем. Кăткăсланнă хутсăр предложенисем. | 1 |
| 3 | 8-мĕш класра вĕреннине аса илесси. Хутлă предложени. Ҫыхăну паллисĕр хутлă предложенисем. | 1 |
| 4 | Тĕрĕслев диктанчĕ. | 1 |
| **Сыпăнуллă хутлă предложенисем (8 сехет)** | | |
| 5 | Мĕн вăл хутлă предложени? Хутлă предложенисен тĕсĕсем. | 1 |
| 6 | Сыпăнуллă хутлă предложенисем, тĕсĕсем. | 1 |
| 7 | Сыпăнуллă хутлă предложенири хутсăр предложенисене ҫыхăнтаракан союзсем. | 1 |
| 8 | Сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси. | 1 |
| 9 | Изложени. | 1 |
| 10 | Сыпăнуллă хутлă предложенисене тишкересси. | 1 |
| 11 | "Сыпăнуллă хутлă предложени" темăна ҫирĕплетни. | 1 |
| 12 | Тĕрĕслев диктанчĕ. | 1 |
| **Пăхăнуллă хутлă предложенисем (21 сехет)** | | |
| 13 | ПХ предложенисем. | 1 |
| 14 | ПХ предложенин пайĕсем. | 1 |
| 15 | Изложени. | 1 |
| 16 | ПХП тĕп предложенипе ҫыхăнтаракан мелсем. | 1 |
| 17 | ПХП предложенисен хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ. | 1 |
| 18 | Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăу палли лартасси. | 1 |
| 19 | ПХП ушкăнĕсем. | 1 |
| 20 | Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем. | 1 |
| 21 | Союзла сăмахлă ПХП. | 1 |
| 22 | Хыҫ сăмахлă ПХП. | 1 |
| 23 | Пайĕсене аффикссемпе ҫыхăнтаракан ПХП. | 1 |
| 24 | Пайĕсене -и аффикспа ҫыхăнтаракан ПХП. | 1 |
| 25 | Пайĕсене падеж аффиксĕсемпе ҫыхăнтаракан ПХП. | 1 |
| 26 | Пайĕсене падеж системине кĕмен аффикссемпе ҫыхăнтаракан ПХП. | 1 |
| 27 | Пайĕсене глаголăн деепричати аффиксĕсемпе ҫыхăнтаракан ПХП. | 1 |
| 28 | Пайĕсене глаголăн причати аффиксĕсемпе ҫыхăнтаракан ПХП. | 1 |
| 29 | Пайĕсене вырăн - йĕркипе ҫыхăнтаракан ПХП. | 1 |
| 30 | Изложени. | 1 |
| 31 | ПХП вĕреннине аса илесси. | 1 |
| 32 | ПХП тишкерсси. | 1 |
| 33 | Тĕрĕслев диктанчĕ. | 1 |
| **Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем (5 сехет)** | | |
| 34 | Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем. | 1 |
| 35 | Кăткăс тытăмлă ҫыхăну паллисĕр хутлă предложенисем. | 1 |
| 36 | Кăткăс тытăмлă ҫыхăну паллиллĕ хутлă предложенисем. | 1 |
| 37 | Кăткăс тытăмлă ПХП. | 1 |
| 38 | Тĕрĕслев диктанчĕ | 1 |
| **Текст (9 сехет)** | | |
| 39 | Текст. | 1 |
| 40 | Чĕлхе, пуплев тата ҫыру. | 1 |
| 41 | Чăваш ҫырăвĕн аталанăвĕпе паянхи сăн - сăпачĕ. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 42 | Публицистика стилĕ, жанрĕсем. | 1 |
| 43 | Публицистика стилĕ. Заметка.Репортаж. | |
| 44 | Публицистика стилĕ. Очерк. Хаклав. | 1 |
| 45 | Публицистика стилĕ. Интервью. | 1 |
| 46 | Изложени. | 1 |
| 47 | Пуплев стилĕсене вĕреннине аса илни. | 1 |
| **Вĕреннине аса илни (4 сехет)** | | |
| 48 | Синтаксиса вĕреннине аса илни. | 1 |
| 49 | Пĕтĕмлетӳ тĕрĕслев диктанчĕ. | 1 |
| 50 | Вĕреннине аса илни. | 1 |
| 51 | Вĕреннине аса илни. | 1 |

**Ачасен ĕçĕсене хакламалли виçесем**

Сăмахпа каласа хуравланине хакламалли ĕçсем

Ачасем чăваш чĕлхи çинчен мĕн пĕлнине тĕрĕслемелли меслетсенчен пĕри вăл – сăмахпа каласа хуравлани. Ачан хуравĕ туллии, çыхăнуллă, шухăш енчен йĕркеллĕ тытса грамматика пулăмне тĕрĕс ăнлантарма пĕлмелле.

Вĕренекенĕн хуравне хаклană чухне çак критерисене тĕпе хумалла: 1) туллилĕхпе тĕрĕслĕхĕ; 2) вĕреннине мĕн таран ăнланни; 3) литература чĕлхин нормисене пăхăнни.

«5» паллă виçи: а) ача вĕреннĕ материала пĕтĕмпех ăнланать, туллин каласа парать; ă) каланине кĕнекери тĕслĕхсемпе çеç мар, хăй тупнисемпе те çирĕплетме пултарсан; б) материала йĕркипе, çыхăнуллă, литература чĕлхин нормисене пăхăнса каласа парать.

«4» паллă виçи: ача «5» паллă хаклавĕн материалне пĕтĕмĕшле пĕлме тивĕç, учитель асăрхаттарнă йăнăша хăй тĕллĕн тӳрлетме пултармалла. Шухăш йĕркине 1-2 çĕрте литература номерне 1-2 тĕлте пăсма юрать.

«3» паллă виçи: ача вĕреннĕ тема материалне туллин уçса параймасть, правилăсене тĕрĕс калаймасть, каланине хăй тĕслĕхсемпе çирĕплетеймест, çыхăнуллă калаймасть, пуплев йăнăшĕсем 3-4 çитме пултараççĕ.

«2» паллă виçи: ача вĕреннĕ материалăн чылай пайне пĕлмест, правилăсене тĕслĕхсемпе çирĕплетеймест, пăтраштарса, çыхăнусăр калать, материала пачах пĕлейменни туйăнать пулсан.

**Вĕренекенсен çыру ĕçне хакласси Çырса илни (пăхса çырни)**

Çырса илме паракан текст калăпăшĕ 5 класра 40-50 сăмахран иртмелле мар. Çырса илнине хакламалли виçесем: «5» паллă ĕçе тирпейлĕ, йăнăшсăр, тĕрĕс пурнăçланă пулсан лартмалла; «4» паллă грамматика ĕçне пурăçланă чухне 1-2 йăнăш янă пулсан лартмалла;

«3» паллă лартнă ĕçре 3-4 йăнăшран ытла пулмалла мар; «2» паллă лартмалли ĕçре йăнăш 5-рен пуĕласа 9-а çитме пултарать; «1» паллă лартмалли ĕçре 10 е ытларах йăнăш пулать.

**Çырса хуравланине хакласси**

5-11 классенче ачасен пĕлĕвне тĕрĕслеме çырса хуравлани те вырăнлă. Ку мелпе 5-6класс ачисем текста мĕнле ăнланнине тата предложенисене тĕрĕс йĕркелеме пултарнине тĕрĕслеме усă кураççĕ. Çырса хуравламалли ыйтусене унччен вулană текст, пурнăçпа çыхăннă пĕр-пĕр кăткăс та интереслĕ тема тавра е ӳкерчĕк тăрăх (çырнă чух ӳкерчĕк ачасен куçĕ умĕнче пулмалла), диафильмпа кинофильм е вĕсен сыпăкĕсем тăрăх йĕркелемелле.

Вулană текст тăрăх хатĕрленĕ ыйтусене хуравлани чылай енчен изложение çывăх. Çавăнпа ыйтусен изложени планĕ евĕр йĕркелеме юрать. Пĕр-пĕр темăпа хаĕрленнĕ ыйтусене хуравласа çырни сочинени майлă. Çавăнпа та ачасем хуравласан çырнă ĕçре сăмах йышĕ

(енчен те кашни ыйтăва 1-2 предложенипе хуравласан) çырса илме паракан текстринчен иртмелле мар.
5 класра 6-10 ыйту пама юрать (енчен те ача кашни ыйтăва 4-6 сăмахран тăракан предложенипе хуравлать пулсан). Çырса хуравланă ĕçсене хакланă чухне çакна шута илмелле:
а) хуравсем тулли, тĕрĕс çыпăçуллă пулни;ă) чĕлхене пĕлни;
б) орфографипе пунктуации хăнăхăвĕ.

Ĕçе пур енлĕн тишкерсе пĕр паллăпа хакламалла:
«5» паллă – пур ыйтăва та тĕрĕс хуравланă (хуравра 1 пуплев, 1 орфографи йăнăшĕ пулма пултарать).
«4» паллă – пур ыйтăва та тĕрĕс хуравланă, анчах та ĕçре 3 орфографи йăнăшĕпе 2 пунктуаци йăнăшĕ е пĕр-икĕ хуравра 2-3 пуплев йăнăшĕ пур.
«3» паллă – панă ыйтусене хуравлама пултарнă, анчах та 4-5 орфографи йăнăшĕ, 3- 4 пунктуаци йăнăшĕ, 4 пуплев йăнăшĕ тĕл пулать.
«2» паллă – панă ыйтусенчен çуррине хуравлайман, текст содержании енчен аяккалла пăрăннă, 6-10 орфографи тата 5-6 пунктуаци йăнăшĕ янă, пуплев йăнăшĕ, «3» паллă лартмалли виçерен иртсе кайнă.

Тест хуравĕсене хакласси
0-32 балл – «2»
33-50 балл – «3»
51-70 балл – «4»
71- 100 балл – «5»

**Диктантсене хакламалли виçесем.**
«5» паллă ĕçе йăнăшсăр çырсан. 1 пĕчĕк орфографи йăнăшĕ е пĕчĕк пунктуаци йăнăшĕ пулсан лартмалла.
«4» паллă виçи: орфографи йăнăшĕ 2 тата пунктуаци йăнăшĕ; е орфографи йăнăшĕ1 тата пунктуаци йăнăшĕ 3; пунктуаци йăнăшĕ 4.
«3» паллă виçи: орфографи йăнăшĕ 4 тата пунктуаци йăнăшĕ 4; орфографи йăнăшĕ3 тата пунктуаци йăнăшĕ 5 çитсен; е пунктуаци йăнăшĕ çеç 7 пулсан;
«2» паллă: орфографи йăнăшĕ 7 таран пулсан тата пунктуаци йăнăшĕ 7 иртмесен; е орфографи йăнăшĕ 6 тата пунктуаци йăнăшĕ 7; е орфографи йăнăшĕ 5 тата пунктуаци йăнăшĕ 9; е орфографи йăнăшĕ 8 тата пунктуаци йăнăшĕ 6 пулсан.
Тĕрĕслев ĕçĕ диктантран тата хушса панă ĕçрен тăрать пулсан - ăна икĕ паллăпа хакламалла. Ун пек чух диктант калапăшне 15 сăмах таран кĕскетме юрать.

**Хушма грамматика ĕçĕн хаклав виçи**

«5» паллă – ĕçе пĕтĕмпех тĕрĕс тунă;
«4» паллă – ĕçĕн 3|4 пайне тĕрĕстунă;
«3» паллă – ĕçĕн 1|2 пайне тĕрĕстунă;
«2» паллă– ĕçĕн çуррине те туман.

**Тĕрĕслев диктанчĕн хаклавĕ**

«5» паллă – пĕр йăнăш та çук;
«4» паллă – 1-2 йăнăш;
«3» паллă – 3-4 йăнăш;
«2» паллă – 5-7 йăнăш таран.

**Сочиненисемпе изложенисене хакламалли виçесем**

Сочиненисемпе изложенисем ачасем шухăша тĕрĕс, çыхăнуллă йĕркелесе çырма пултарнине, пуплев аталанăвĕн шайне тĕрĕслемелли тĕп формăсем шутланаççĕ.
5-9 классенче изложенисемпе сочиненисем çыртарнă чух вĕренекенсен калаçупа çырăвне аталантарма программăра мĕн-мĕн палăртнине асра тытмалла.
изложени валли ăс-пуçа аталантарас, кăмăл-сипете çирĕплетес енчен лайăх текстилмелле. Калăпăшĕ вăтамран 5 класра 95-130 сăмах пулмалла.

Изложенин е сочиненин содержанине хакланă чухне çак енсене шута илмелле: а) çырни темăпа, тĕп шухăшпа килĕшсе тăнине;
ă) ĕçсене туллин ĕырса панине, фактсене тĕрĕс çырса кăтартнине; б) стиле яка тытса пынипе пыманнине.

**Сочиненипе изложени хаклавĕ**

| Хаклав палли | Мĕн шута илмелле | |
|---|---|---|
| | Содержанипе чĕлхе пуянлăхĕ | Тĕрĕс çырма пĕлни |
| «5» паллă | Çырса пани темăпа килĕшӳллĕ. Тĕп шухăша ăнланса, туллин, пăтраштармасăр çырса кăтартнă, сăмах пĕлтерĕшне пăтраштарман. Сăмах йышĕ çителĕклĕ. Предложенисене грамматика тĕлĕшĕнчен лайăх йĕркеленĕ. Стиль енчен килĕшӳллĕ çырнă. Сочинени содержанийĕнче пуплевре пĕрер çитменлĕх пулма пултарать. | 1 орфографи йăнăшĕ; (е 1 пунктуаци йăнăшĕ;1 грамматика йăнăшĕ;) |
| «4» паллă | Пĕтĕмĕшпе илсен содержании темăпа килĕшӳллĕ, анчах кăшт унран пăрăнни пур. Çырни, тĕпрен илсен, тĕрĕс, анчах уйрăм çĕрте фактсене пăснă. Шухăш татăлни тĕл пулать. Сăмах йышĕ çителĕклĕ, пĕр стилпе çырнă, чĕлхи илемлĕ. Содержанире 2, пуплевре 3-4 çитменлĕх пулма пултарать. | 2 орфографи йăнăшĕпе 2 пунктуаци йăнăшĕ; (е 1 орфографи йăнăшĕ; 3 пунктуаци йăнăшĕ; е 4 пунктуаци йăнăшĕпе 2 грамматика йăнăшĕ;) |
| «3» паллă | Ĕçе темăран чылай пăрăнса çырнă. Тĕп шухăшсене каласа панă, анчах тĕрĕсех мар фактсем пур. Йĕркеллех, çыхăнуллах çырман. Сăмах йышĕ чухăнрах, шухăша тивĕçлине суйласа илмен, пĕр пек предложенисемпе усă курнă. Стиль тикĕслĕхĕ çук, илемлех çырман. Ĕçре содержани енчен 4 çитменлĕх, пуплев енчен5 çитменлĕх пур. | 4 орфографи йăнăшĕпе 4 пунктуаци йăнăшĕ; (е 3 орфографи йăнăшĕпе 5 пунктуаци йăнăшĕ; е 7 пунктуаци йăнăшĕпе 4 грамматика йăнăшĕ) |
| «2» паллă | Ĕçре темăна уçса паман. Содержанире тĕрĕс мар вырăн чылай. Шухăш çыхăнуллăхĕ çук, план тăрăх çырман. Стиль пĕр пек мар. Содержанипе пуплевре 6-7 çитменлĕх пур. | 7 орфографи йăнăшĕпе 7 пунктуаци йăнăшĕ; (е 6 орфографи йăнăшĕпе 8 пунктуаци йăнăшĕ; е 5 орфографи йăнăшĕпе 9 пунктуаци йăнăшĕ; е 8 орфографи, 6 пунктуаци йăнăшĕ тата 7 грамматика йăнăшĕ). |

**Чăваш чĕлхипе литература пуплевне тата пуплев хăнăхăвне изложенипе сочинени тăрăх хакламалли пĕтĕмĕшле таблица.**

| | содержани | пуплев | орфографи | пунктуаци | грамматика |
|---|---|---|---|---|---|
| «5» | 0-1 | 0-1 | 0 | 0 | 0 |
| | 0-1 | 0-1 | 0 | 1 | 0 |
| | 0-1 | 0-1 | 0 | 0 | 1 |
| | 0-1 | 0-1 | 1 | 0 | 0 |
| «4» | 0-2 | 0-3 | 0 | 1 | 1 |
| | 0-2 | 0-3 | 0 | 0-1 | 2 |
| | 0-2 | 0-3 | 0 | 2-5 | 0-2 |
| | 0-2 | 0-3 | 1 | 0 | 1-2 |
| | 0-2 | 0-3 | 1 | 1-3 | 0-2 |
| | 0-2 | 0-3 | 2 | 0-4 | 0-2 |
| | 0 | 0 | 3 | 0 | 0 |
| «3» | 0-4 | 0-5 | 0 | 0-4-8 | 3-4 |
| | 0-4 | 0-5 | 0 | 0-9 | 0-4 |
| | 0-4 | 0-5 | 1 | 0-3 | 3-4 |
| | 0-4 | 0-5 | 1 | 4-6 | 0-4 |
| | 0-4 | 0-5 | 2 | 0-3 | 3-4 |
| | 0-4 | 0-5 | 2 | 4-6 | 0-4 |
| | 0-4 | 0-5 | 3 | 0-5 | 0-4 |
| | 0-4 | 0-5 | 4 | 0-6 | 0-5 |
| | 0-4 | 0-5 | 5 | 0-5 | 0-5 |
| | 0-4 | 0-5 | 6 | 0-6 | 0-6 |
| «2» | 0-6 | 0-7 | 5 | 9 | 0-6 |
| | 0-6 | 0-7 | 6 | 8-10 | 0-6 |
| | 0-6 | 0-7 | 7 | 7-9 | 0-6 |
| | 0-6 | 0-7 | 8 | 0-8 | 0-6 |